**Демонстрационный вариант
контрольно-измерительного материала для
промежуточной аттестации в форме диктанта в 6 классе МБОУ
«Старосаврушская ООШ» Аксубаевского муниципального района РТ
по родному (чувашскому) языку**

Уйăх витĕмĕ

Çĕре пĕрмаях уйăх витĕм кӳрет. Çак витĕме вара çĕр çинчи пĕтĕм чĕр чун, çав шутра тĕрлĕ ӳсен-тăран та туять. Тулли уйăх вăхăтĕнче ӳсен-тăран çĕн уйăхринчен нумайрах шыв çăтать.

Уйăх витĕм кӳнĕрен клеткăсенче те, тавралăхра та тĕрлĕ химилле пулăмсем улшăнаççĕ. Ӳсен-тăран, пахча çимĕçсем, тĕрлĕ улма-çырла тулли уйăх чухне хăвăртрах ӳсеççĕ.

Акас, лартас ĕçсене уйăх хушăнса пынă чух, тĕрлĕ сиенлĕ хурт-кăпшанкăпа çум курăксене пĕтерес тесен уйăх катăлса пынă чухне тумалла. Тымар çимĕçсене типĕ çанталăкра, уйăх катăлса пынă чухне пухса кĕртме тăрăшмалла.

Уйăх тулнă чух йывăç-тĕмсен турачĕсене иртме хушмаççĕ. Вĕсем пушшех те нумай хунавланса кайма пултараççĕ.

Авал сиплĕ курăксене уйăх тулнă кун ир-ирех пухма тăрăшнă. (109 сăм.) («Хыпар».)